ЫРАН – СУЙЛАВ! Хисеплĕ суйлавçăсем,

Сире суйлав участокĕсем 8 сехетрен пуçласа 20 сехетчен кĕтеççĕ

Çĕнтерӳ çулĕ

Вăрнар район хаçачĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

2011 çул • раштав/декабрь/ уйăхĕн 3-мĕшĕ • шăмат кун • 144-145/10460/ № • Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

УВАЖАЕМЫЕ ЖИТЕЛИ ВУРНАРСКОГО РАЙОНА!

3 декабря ежегодно проводится Международный день инвалидов. Этот день утвержден Генеральной ассамблеей с целью привлечения внимания к проблемам инвалидов, защиты их достоинства, прав и благополучия, на привлечение внимания общества на преимущества, которые оно получает от участия инвалидов в политической, социальной, экономической и культурной жизни. В настоящее время в Вурнарском районе проживает более 2400 инвалидов, из них детей – инвалидов 170 человек.

Наша задача – создать благоприятные условия для проживания людей с ограниченными возможностями. Обращаюсь к тем людям, которые могут оказать помощь тем, кто нуждается в поддержке. Давайте сделаем все возможное, чтобы помочь людям с ограниченными возможностями – добрым участием, словом, поступком. Только в этом случае они смогут забыть о своих недугах и трудностях, жить полноценной жизнью, быть уверенными в завтрашнем дне. Обращаюсь с искренними словами благодарности к общественным объединениям Вурнарского района: Общество слепых, Общество инвалидов – которые проявляют внимание и милосердие к людям с ограниченными возможностями и помогают решать им насущные проблемы.

От всей души желаю всем Вам доброго здоровья, душевного спокойствия и благополучия, тепла и любви близких и родных Вам людей.

И.о. главы администрации
Вурнарского района
Н.ПЕТРОВ.

ПАЯН – ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ИНВАЛИДСЕН КУНĔ

Сăн ӳкерчĕке çулла инвалидсем хушшинче ирттернĕ пулăç кунĕнче тунă.

Пенси виçине ӳстерес тесен

РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ республикăри тата районсенчи массăллă информаци хатĕрĕсен журналисчĕсене пухса селекторлă пресс-конференци ирттерчĕ. Ăна уйрăм управляющийĕн заместителĕ Валерий Николаев йĕркелесе ертсе пычĕ.

Пресс-конференцин теми – пенсин патшалăх софинансированийĕпе çыхăннă Программăн малтанхи кăтартăвĕсем. В.Николаев пĕлтернĕ тăрăх, ĕçлеме пуçланăранпа – виçĕ çул хушшинче – программăна Раççейри 6 миллион çын хутшăннă, çав шутра Чăваш енре 116 пин енне заявлени йышăннă. Республикăра ку программăна, тĕпрен илсен, 20–40 çулти (75%) граждансем ытларах хутшăнаççĕ. Вĕсенчен пысăк пайĕ – хĕрарăмсем тата хулара пурăнакансем. Программăна 14 çултан тытăнса хутшăнма май пур. Ку мелпе пенси виçине ӳстерме кăмăл тунă чи аслă гражданин паянхи куна 96 çулта.

Пĕтĕмĕшле илсен, 2009–2011 çулсенче Раççейре программа участникĕсем тăхăр миллиард ытла тенкĕлĕх ирĕклĕ майпа тӳлевсем хывнă, пирĕн республикăра – 93 миллион тенкĕ ытла. Программа условийĕсемпе килĕшӳллĕн, хăйсен пенсин пухăнакан пайĕн виçине ӳстерме çулталăкра 2000-тен 12000 тенкĕ таран тӳленисене çавăн чухлех патшалăх хушса парать.

– Патшалăх пенси виçине пысăклатма паракан майпа усă курмасăр ан юлăр. Тӳлевсене çулталăк вĕçленичченех хăть хăш банкра е ĕç вырăнĕнче тӳçарма пултаратăр. Вĕсене Перĕкет банкĕн тӳлев терминалĕсем те йышăнаççĕ – Пенси фончĕн вырăнти уйрăмĕнчен илнĕ, штрих-кодлă квитанци кăна кирлĕ, – ăнлантарчĕ Валерий Николаев.

Предприятисемпе организацисен те программăна хутшăнма ирĕк пур. Вĕсем хăйсем патĕнче ĕçлекен, программăна кĕнĕ çынсемшĕн хушма тӳлевсем хывма пултараççĕ. Чăваш енре виçĕ çул хушшинче 17 организаци ĕçлекенсемшĕн 767 пин ытла тенкĕ тӳленĕ. Программăна хутшăнакансене, хушма тӳлевсем хывнă организацисене налук тĕлĕшпе çăмăллăхсем параççĕ.

Пенсин патшалăх софинансированийĕн программи çинчен тĕплĕнрех ыйтса пĕлес тесен, 8-800-505-55-55 тӳлевсĕр телефонпа талăкĕпех шăнкăравлама е Раççей Пенси фончĕн вырăнти управленине пыма юрать. Республикăри уйрăмăн «вĕри лини» телефонĕ – 58-59-45.

И.ЯКОВЛЕВА.

Пулăшу анлăланать

Хаçатăн паянхи хăни – Чăваш Республикин юстици министрĕ Надежда Викторовна ПРОКОПЬЕВА. Унпа çынсене тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси çинчен калаçатпăр.

ПИРĔН ИНТЕРВЬЮ

– Надежда Викторовна, тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси паян – актуаллă ыйту. Ăнлантарăр-ха, республикăра пурăнакансем мĕнле пулăшăва шанма пултараççĕ?

– Юридици пулăшăвне илес ыйту, тĕрĕссипе, пĕрмаях тухса тăрать. Çынсене, юристсене кăна мар, пурнăçри тĕрлĕ сферăра право нормисене пĕлни тата вĕсемпе тĕрĕс усă курни кирлĕ. Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ парасси – йывăр лару-тăрури, сахал тупăшлă граждансене социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерес задачăсене татса памалли мелсенчен пĕри.

Республикăра тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ пама РФ патшалăх влаç органĕсен территориллĕ органĕсене, хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ енĕпе ЧР патшалăх влаç органĕсене, адвокатсен тата нотариуссен професси пĕрлешĕвĕсене, юридици кадрĕсене хатĕрлекен аслă шкулсен юридици клиникисене, юристсен обществăлла пĕрлĕхĕсене, правона хӳтĕлекен организацисене явăçтарнă. Пулăшун тĕп формисем – консультацисем, документсен тата тавăç хучĕсен проекчĕсене хатĕрлесси, судра граждансен интересĕсене хӳтĕлесси.

– Хăш ушкăнри çынсене адвокатсем юридици пулăшăвĕпе тӳлевсĕр тивĕçтереççĕ?

– Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн, социаллă тĕлĕшĕнчен хӳтлĕхсĕр граждансене – сахал тупăшлă граждансене; тавăç паракансене – алиментсем шыраса илессипе, тăрантаракан вилнипе е ĕçре сывлăх сиенленнипе укçа илессипе; Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсене; репрессисенче шар курнă граждансене; пенсионерсене; профилактика системин учрежденийĕсенчи çула çитмен çамрăксене адвокатсем тӳлевсĕр пулăшаççĕ. Ку задачăсене пурнăçлас тĕллевпе ЧР Адвокатсен палати çумĕнче 2006 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа «Правовая среда» обществăлла приемнăй туса хунă. Унăн ĕç графикĕ «Советская Чувашия» тата «ЧР Адвокатсен палатин вестникĕ» хаçатсенче пичетленет. Обществăлла приемнăй адресĕ: Шупашкар хули, Николаев урамĕ, 19-мĕш çурт. Кунсăр пуçне 57-13-32 телефонпа çырăнма пулать.

– Надежда Викторовна, тӳлевсĕр пулăшу илме мĕнле документсем кирлĕ?

– Адвокатсенчен тӳлевсĕр пулăшу ыйтакансен çак документсем пулмалла:

– паспортпа унăн копийĕ (е РФ гражданствине çирĕплетекен урăх документ);

– çемьене сахал тупăшлă тесе регистрацилени çинчен справка;

– ветерансен – удостоверени; репрессисенче шар курнисен тата профилактика системин учрежденийĕсенчи çамрăксен – справка.

Паянхи кун ЧР Юстици министерстви пухмалли документсен перечененьне сахаллатассипе ĕçлет.

– Эсир, ЧР ĕç тăвакан влаç органĕн ертӳçи пулнă май, пĕрмаях çынсене йышăнатăр. Граждансем ытларах мĕнле ыйтусемпе килеççĕ?

– Чăнах та, ЧР Юстици министерстви тĕрлĕ формăллă юридици пулăшăвĕ парать. Чи анлă сарăлнă меслет – сайт çине хăварнă ыйтусене хуравласси, саккунсене ăнлантарасси. Тепĕр форма – çынсене уйрăммăн йышăнасси. Çынсене кăсăклантаракан ыйтусем, тĕпрен илсен, граждансене социаллă, пенси тивĕçтерĕвĕсем парассипе, суд акчĕсене хирĕçлесе çырассипе çыхăннă.

– Надежда Викторовна, тӳлевсĕр юридици пулăшăвне Шупашкарсăр пуçне республикăра тата ăçта илме май пур?

– Граждансене консультаци парассине, информаципе тивĕçтерессине Тĕп федераллă инспекторăн обществăлла приемнăйĕнче пурнăçлаççĕ (Шупашкар, К.Маркс урамĕ, 33-мĕш çурт, 62-67-02). Обществăлла приемнăйсем Суд приставĕсен службин республикăри управленийĕнче (Шупашкар, Элкер урамĕ, 10-мĕш çурт, 40-92-25), налук службин управленийĕнче тата ытти çĕрте пур.

Хăйсен полномочийĕсене кура, граждансен прависемпе саккунлă интересĕсене нотариат та хӳтĕлет. Унăн обществăлла приемнăйĕ Гагарин урамĕнчи 3-мĕш çуртра вырнаçнă (телефонĕ – 62-28-64, графикне сайтра пĕлтернĕ). Районсенче, ял поселенийĕсенче пурăнакансем Пĕрлĕхлĕ информаци кунĕсем вăхăтĕнче те право ин-

2 стр.

Коммунальщиксен ултавне çиеле кăларнă

Патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕпе прокуратура управляющи компанийĕсенче ирттернĕ тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсене халăха пĕлтернĕ

Чăваш Республикин Президенчĕн тĕрĕслев управленийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăха пурнăçлаканĕ Лариса Силова пĕлтернĕ тăрăх, тĕрĕслев кăтартăвĕсемпе должноçри 152 çынна тата юридици сăпатĕнчи 45 çынна административлă явап тыттарнă, 937 предписани çырнă. Чăваш енри мĕн пур 130 управляющи компанине рейдсемпе тĕрĕсленĕ.

Л.Силова тĕрĕслев управленийĕ тӳрремĕнех хутшăннипе халĕ Тăвай салинчи нумай

5 стр.

Районти «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата 2012 çулăн пĕрремĕш çурри валли çырăнтармалли тапхăр вĕçленсе пырать. Хаçат хакĕ: почта уйрăмĕсенче – 187 тенкĕ те 80 пус, редакцие килсе илмелле – 110 тенкĕ. Юратнă хаçата çырăнма васкăр!

ÇАНТАЛĂК

	Вырсарни кун 4.12	Тунти кун 5.12	Ытлари кун 6.12	Юн кун 7.12
кăнтăрла	-3	+2	+3	-1
çĕрле	0	0	+1	-2

«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.

ПАЯН – ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ИНВАЛИДСЕН КУНĔ

Ёненĕве-шанăçа çухатсан...

Нумай чухне сывă-тĕреклĕ, çителĕклĕ пурăнакан çынсемех шăпа çине ӳпкелешнине илтме пулать. Анчах та теприсен инкекĕпе танлаштарсан вĕсен «нăйкăшăвĕ» ним тĕшне те тăмасть

Амăшĕ вырăнĕнче – воспитатель.

24-ри Владимир Киселевăн пĕтĕм пурнăçĕ – кĕрешӳ: çут тĕнчене килсенех – çут хĕвел айĕнче вырăн тупассишĕн, ачалăх çулĕсенче – хăй те ыттисем пекех çын пулнине ĕнентерессишĕн, халĕ – паянхи условисенче пурăнма хăнăхассишĕн. Чи йывăр кĕрешĕвĕ вара – çынсене илтес тесе тăрăшни...

Вова амăшĕн варĕнчех йĕркеллĕ аталанман, çут тĕнчене вăл айăплă килнĕ: унăн икĕ хăлхи те çук, çавăнпа та хытă калаçу та уншăн темĕнле сасăсем евĕр кăна (полная атрезия слуховых проходов; двусторонняя кондуктивная тугоухость III степени). Тута хусканăвĕпе хăш-пĕр сăмахсене ăнланать-ха вăл, анчах та çак «кăлтăкран» вăтаннипех нумай чухне пушшех те аванмарланса каять. Илтменнипех йывăррăн калаçать – çăвар маччи ӳт илеймен. Ӳсĕмĕпе пурнăçĕнчи телейлĕ вăхăчĕ пулмалли тапхăрта каччă çакнашкал нушаланни ытла та чĕрене хускатрĕ. Кунран та ытла – вăл мĕнлерех условисенче пурăнни... -

Тăван ашшĕ-амăшĕн ăшшине нихçан та туйман вăл – вĕсене сусăр ача кирлĕ пулман. Тăван киле ача çурчĕсем улăштарнă: малтан Улатăрти ача çурчĕ, хыççăн – Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьскинчи шкул-интернат. Çапах та хулăм альбомри сăн ӳкерчĕксене пăхнă май Вова хăйшĕн çак вăхăтсем телейлĕ пулнине хут çине çырса пĕлтерчĕ (пирĕн калаçу шăпах çак мелпе иртрĕ). Стена çинчи сăн ӳкерчĕксенчи хĕр юратнă çынни пулнине хавасланса каларĕ.

Лайăх вĕреннĕшĕн, футбол, хоккей, сĕтел çи теннисла выляса, чупса, тăршшĕне сиксе çĕнтернĕ Грамотисене кăтартрĕ. Алсиш-нуски, мунчаласем çыхнă. Анчах та çак хаваслăх ун куçĕнче хăвăртах сӳнчĕ – чунне пӳлĕмри условисем пăсни тӳрех сисĕнчĕ.

Чăн та, кăмпăс шăрши Вовăн пӳлĕмне кĕрсенех сăмсана пырса çапать (вăл Калининăри 24-мĕш училищĕн общежитийĕнче пурăнать). Урамра хĕл кунĕ пулин те ăшă батарейисем лĕп кăна. Стенасем йĕп-йĕпе тăнипе обойсем унтан та кунтан уйрăлнă, чӳрече аякĕсем те йĕпепе хуралсаларнă. Пĕрремĕш хут пулнăран усал шăршă пӳлĕмре уйрăмах хытă сарăлнă. Урайĕнчи шăтăксене вырăнăн-вырăнăн хаçатпа, çĕтĕкпе măкланă. Алата электричество плити çинче пĕçерет. Çăвăнма... Шупашкара măнаккăшĕ патне çӳрет.

Инвалид çакнашкал условисенче пурăнни, паллах, тĕлĕнтерет. Кушак çурине ăшă пӳртрен кăларса ывăтнăнах – Вовăн интернат хыççăнхи пурнăçне çапла танлаштармалла мар-и? Паллах, эпир сăлтавĕсене пĕлместпĕр, анчах та ашшĕ-амăшĕ пурăннă хваттерĕ ывăлĕ чĕрĕ çĕртенех мĕншĕн урăх çынсен аллине куçнă? Нивушлĕ инвалидăн тивĕçлĕрех условисенче пурăнма ирĕк çук?

Каччă телее ĕненме пăрахнине ăнланма пулать: пĕчĕк пенси укçипе вăл пурнăç тăвассишĕн кĕрешет, нумай чухне пĕчченлĕхре. Ку таранччен юлташĕсемпе «В контакте» социаллă сетьре калаçнă-ха вăл, анчах халĕ компьютерĕ те ĕçлемест. Ирĕксĕрех Вова ытларах та ытларах хуравсăр ыйтусем хушшинче явăнать – мĕншĕн ун шăпи çапла килсе тухнă, мĕншĕн вăл халĕ пĕчченех, мĕншĕн çынсем сусăррисене йышăнасшăн мар, мĕншĕн ăна пур çĕрте те хваттерпе пулăшма çуккине калаççĕ, мĕншĕн ăна II ушкăнран инвалидлăхран виççĕмĕшне куçарнă... Мĕншĕн?..

С.ЧИКМЯКОВА.



Тĕл пулура

Виçĕм кун, Пĕтĕм тĕнчери инвалидсен кунĕ умĕн, Вăрнарти «Встреча» кафере тĕл пулу иртнĕ.

Паян инвалидсене хумхантаракан ыйтусем сахал мар. Тĕл пулура вĕсем çине Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕн ертӳçи Л.Редькова, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ О.Казакова, халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен пай пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыракан И.Смолина, соццентр ертӳçи Л.Николаева, 26-мĕш аптека директорĕ В.Куликов, районти ветерансен канашĕн председателĕ А.Ильин хуравланă.

Юлашки вăхăтра инвалидсен пурнăçне савăнăç хĕлхемĕ кĕртес тĕлĕшпе нумай ĕç пурнăçланать. Сусăррисем хушшинче çулсеренех тĕрлĕ мероприятисем иртересси йăлана кĕнĕ. Уйрăмах вĕсене тĕрлĕ хуласене тухса çӳрени савăнтарать. Пурнăçланă ĕçсем пирки инвалидсен районти обществин председателĕ Е.Сергеева каласа кăтартнă. Отчетри фактсене экран çинчи слайдсем çирĕплетсе панă.

Районта паянхи куна тĕрлĕ сăлтава пула инвалида тухнă 2400 ытла çын шутланать. Вĕсенчен чĕрĕк пайĕ – поселокра, ыттисем ялсенче пурăнаççĕ.

Пулăшу анлăланать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

...формацине пĕлме, ыйтусем пама пултараççĕ. Информаци ушкăнĕсенче – патшалăх влаç органĕсен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен представителĕсем. Пĕрлĕхлĕ информаци кунĕсем çинчен информацие www.cap.ru сайтра вырнаçтарнă.

Çавăн пекех Чăваш патшалăх университечĕ çумĕнчи право пĕлĕвĕн Центрĕ те, Шупашкарти кооператси институчĕ çумĕнчи юридици клиники те, Социаллă университетăн Шупашкарти филиалĕ те тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерессĕ.

Паллах, Министерство та ку тĕлĕшпе пулăшать: ыйтăва çырупа е электронлă майпа яма, йышăну кунĕнче хăвăр килме пултаратăр.

– Кăçалхи июнь уйăхĕнче Патшалăх Думине «Раççей Федерацийĕнчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» саккун проектне тăратнă. Унта мĕнле çĕнĕлĕхсем пур?

– Ку саккунра РФ гражданĕсен тӳлевсĕр юридици пулăшăвне илмелли прависене гарантилессине пăхса хăварнă. Палăртнă тăрăх, юридици пулăшăвĕ парассипе патшалăх тата патшалăхăн мар системăсем ĕçлемелле.

Пулăшăва хăçан тата кам тивĕçлине те çирĕплетсе хăварĕç. Сăмахран, коммуналлă тивĕçтерӳсен потребителĕсен прависене хӳтĕлесси, ашшĕпĕхпе амăшлĕхне палăртасси е хирĕçлесси, алиментсем шыраса илесси, ĕç вырăнне сыхласа хăварасси.

– Надежда Викторовна, çĕнĕ саккун проекчĕ тăрăх граждансен мĕнле ушкăнĕсен тӳлевсĕр юридици пулăшăвне илме право пур?

– Саккун проектне çак ушкăнсене кĕртнĕ:

– сахал тупăшлă граждансем – çемьере пĕр çынна тивекен тупăш пурăнмалли минимум виçинчен пĕчĕкрех пулсан;

– I тата II-мĕш ушкăнри инвалидсем;

– Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем, РФ Геройĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмла ĕç Геройĕсем;

– инвалид-ачасем, ашшĕ-амăшĕн хӳтлĕхĕсĕр юлнă ачасем, вĕсен представителĕсем;

– аслă çулсенчи граждансем (55 çултан аслăрах хĕрарăмсем тата 60 çултан иртнĕ арçынсем);

– профилактика системин учрежденийĕсене лекнĕ çула çитмен çамрăксем тата вĕсен интересĕсене хӳтĕлекен представителĕсем.

Çак ушкăнсенчи граждансен консультаци илме, заявленисем тата ытти документсем хатĕрлеме, хăйсен интересĕсене судра хӳтĕлеме ыйтма право пур.

– Гражданин хăть хăш адвокатран тӳлевсĕр пулăшу ыйтма пултарать-и?

– Тĕрĕссипе, адвокат палатин тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕпе тивĕçтерекен адвокатсен списокне йĕркелемелле. Çулсеренех, декабрĕн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр, списока массăллă информаци хатĕрĕсенче пĕлтермелле тата Интерент сетĕнче вырнаçтармалла. Саккун проекчĕпе килĕшӳллĕн, пулăшупа тивĕçтерекенсем – аслă юридици пĕлĕвĕ илнĕ специалистсем. Ку профильпе вăтам пĕлӳ пуррисем тата юридици специальноçĕпе аслă шкулсенче вĕренекенсем (3 курс пĕтернисем) сăмахпа консультаци ирттерме пултараççĕ.

– «Раççей Федерацийĕнчи тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ çинчен» федераллă саккуна хăçан йышăнĕç?

– Кăçалхи ноябрĕн 2-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думи ăна виççĕмĕш вулавпа ырласа йышăннă. Кĕçех вăя кĕрĕ тесе шутлатпăр.

Саламлатпăр!

Хисеплĕ те юратнă çыннăмăра – аннене, măшăрăма, кукамая, хунямана – **Пăртас ялĕнче пурăнакан Ольга Ильинична СЕМЕНОВАНА** – 60 çулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чунчĕререн хисеплесе, сума суса ăшшăн саламлатпăр.

Вăрăм та тикĕс ĕмĕр пурăнма çĕнĕрен-çĕнĕ вăй-хал, çирĕп сывлăх, иксĕлми ырлăх-телей сунатпăр.

Ылтăн çыннăмăр эс пирĕн, савăнатпăр эс пуртан.
Юбилей саламĕ йышăн пирĕнтен чунтан-вартан.
Кун-çулу телейлĕ пултăр, ан хавшатăр сывлăху.
Тем пулсан та пуянлантăр ырăпа сан кăмăлу.

Măшăрĕ, хĕрĕсем, мăнукĕ, кĕрӳшĕ.

Саккуна пăхăнман

Прокуратура ĕçĕ-хĕлĕн тĕп енĕсенчен пĕри – коррупцие хирĕç кĕрешессипе саккунсене пурнăçланине асăрхаса тăрасси. Ку саккунсенче ыйтнине пăхăнса, Чăваш транспорт прокуратури транспорт объекчĕсенче коррупцие хирĕçле саккунсене пурнăçланине тĕрĕслессине çирĕп йĕркеленĕ.

Раççей Шалти ĕçсен министерствин тытăмĕнчи должноçсене ĕçлеме кĕрес текенсен, шалти ĕçсен органĕсен сотрудникĕсен, шалти çарсенче службăра тăракансен, Раççей Шалти ĕçсен министерствин тытăмĕнчи федераллă патшалăх граждан служащийĕсен саккунпа килĕшӳллĕн, кадрсемпе тимлекен органа хăйсен, măшăрĕсен, çула çитмен ачисен тупăшĕ, пурлăхĕ тата куçман пурлăхĕ çинчен апрелĕн 30-мĕшĕччен иртнĕ çулшăн сведенисем тăратмалла.

Чăваш транспорт прокуратури тĕрĕслев ирттернĕ май, РФ Шалти ĕçсен министерствин Чăваш енри линейнăй пайĕн сотрудникĕсем пĕлтĕрхи çулшăн тĕрĕс мар сведенисем кăтартнă тĕслĕхсем тупăннă. Хăшĕ-пĕри хваттер тата çĕр харпăрлăхра пурри, транспорт хатĕрĕ çинчен, çемье членĕсен тупăшĕ çинчен сведенисене паман. Сведенисем тĕрĕс пулманни коррупциллĕ е правăна пăснă ытти тĕслĕхсене асăрхаттарма май памаççĕ, вĕсенче патшалăх служащийĕсем чарусене пăхăнманни çинчен даннăйсем пулма пултараççĕ.

Чăваш транспорт прокуратури саккуна пăхăнман сотрудниксене тупăш тата пурлăх пирки тĕрĕс сведенисем пама хушма Шупашкарти Ленин район судне ыйту çырнă.

Суд ларăвĕнче явапçăсем тавăçа йышăннă. Суд прокурор ыйтăвĕсене тивĕçтернĕ, ку сотрудниксем тупăш, пурлăх, куçман пурлăх çинчен сведенисем тăратма тивĕçлине палăртнă. Кунсăр пуçне ĕçе судра пăхса тухнăшăн тӳленĕ патшалăх пошлинине те (200 тенкĕ) вĕсенчен шыраса илнĕ.

А.МИХАЙЛОВ,
Чăваш транспорт прокурорĕн аслă помощникĕ
юстици кĕçĕн советникĕ.

ВĔРЕНУ

Хастар-ха ветеран...

Антонина Дмитриевна Малова вĕрентекене Шĕнер тăрăхĕнче пĕлмен-палламан çын çуках пулĕ. Хăйĕн пурнăçĕн 50 çулне вăл çĕр çинчи чи кирлĕ, чи мирлĕ – ачасене вĕрентсе тĕрĕс воспитани парас, пурнăç çулĕ çине кăларас ĕçе халалланă. 50 çул Шĕнер Ишекри шкулта пуçламăш класс ачисене вĕрентнĕ. Антонина Дмитриевна тивĕçлĕ канура ĕнтĕ. Апла пулин те кăçалхи сентябрьтен ăна каллех тăван шкулта ĕçлеме чĕнсе илчĕç.

Ачасемпе, ашшĕ-амăшĕсемпе, ял-йышпа яланах вашават çак хĕрарăм-учительтен тĕлĕнетĕн. Ăçтан тухать-ши унăн вăй-хăват, ăш пиллĕх, ырă сăмах пурин валли те?

Кĕçĕн классемпе ĕçлеме йывăррине питĕ лайăх чухлатпăр. Пĕчĕкскерсене таса та илемлĕ çырма, тĕрĕс вулама, шутлама вĕрентесси, çав вăхăтрах ачасемпе хăвна тытма пĕлесси çăмăл мар. Хăйĕн ĕçне чунтан юратмасан, чухламасан, хăй те аталанса пымасан, тавра курăма пуянлатмасан учителĕн хакĕ çухалать. А.Малова вара çав тивĕçе тĕрĕс, тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Вăл самана таппипе тан утать.

Антонина Дмитриевна вĕренекенĕсемпе пĕр чĕлхе тупма пĕлни пире тĕлĕнтерет те, савăнтарать те. Ачасене тăван тавралăха упрама, чăваш чĕлхине, культурине аталантарма пулăшни питĕ пĕлтерĕшлĕ, паллах. Вăл вĕренекенсемпе тĕрлĕрен мероприятисем ирттерме ăста. Кунта вара ашшĕсемпе амăшĕсене те явăçтарать. Унăн урокĕсем питĕ интереслĕ, кăсăклă иртеççĕ.

Темиçе ăру вĕрентсе кăларнă Антонина Дмитриевнана эпир, ачасен ашшĕсемпе амăшĕсем, тав тăватпăр. Ун умĕнче пуçа таятпăр. Учитель профессине çӳлте тытса пынăшăн, чунчĕре ăшшишĕн, пирĕн пепкесене ырă чĕреллĕ, ăслă çынсем пулма пулăшнăшăн хĕпĕртетпĕр.

Учитель-ветеран сăн-пичĕпе те, кĕлетки-çурăмĕпе те, чĕрипе те ан ватăлтăр. Унăн ырă кăмăлĕ нихăçан та ан иксĕлтĕр, сăн-питĕнчен хавас кулă ан çухалтăр.

Ашшĕ-амăшĕсем.

Амăшĕсене саламларĕç

Калининăри вăтам шкулта Амăшĕн кунне уявларĕç. Иккĕмĕш класра уяв программи «Асанне арчи» ятлă пулчĕ. Класа асаннесен арчинчен кăларнă япаласемпе илемлетнĕ. Мĕн кăна çук пулĕ кунта: тутăрсем, кĕпесем, тĕрĕсем! Тĕрлесе тата çыхса тунă япаласем куçа илĕртеççĕ. Уява ачасен асламăшĕсем, кукамăшĕсем тата амăшĕсем хутшăнчĕç. Анна Димитриевапа Дарина Васильеван амăшĕсем çыхма юратаççĕ. Антон Ивановăн асламăшĕ тĕрлеме ăста. Вăл хăйĕн кукамăшĕ çыхнă сĕтел çивиттине пĕчĕк арчара илсе килчĕ. Ку çивитти 80 çул каяллах çыхнăскер иккен. Амăшĕсемпе ачасем арчăра упраннă, чуна çывăх япаласем çинчен кăмăллăн каласа пачĕç. Ачасене çăпата, авалхи кĕнекесем, йĕс шăнкăрав уйрăмах кăсăклантарчĕç. Уява Буратино та (Александр Кожевников) çитрĕ, ачасем валли кучченеç илсе килчĕ.

А.ВАСИЛЬЕВА.

Ҫирӗп тӗрӗслетпӗр

РФ Шалти ӗҫсен министерствин муниципалитетсем хушшинчи «Вурнарский» пайӗ кӑҫалхи вунӑ уйӑхра преступленисем туни ҫинчен пӗлтернине йышӑннӑ тата регистрациленӗ, ыйтусене татса панӑ чухне саккуна пӑхӑнассине ҫирӗплетессипе оперативлӑ ҫичӗ канашлу, тӗрӗслев комиссийӗн ултӑ ларӑвне ирттернӗ.

ПРАВО

Раҫҫей Шалти ӗҫсен министерствин приказӗпе ҫирӗплетнӗ Инструкципе килӗшӳллӗн, учетпа регистраци дисциплинине тата статистика ӗҫӗ тӗлӗшпе лару-тӑрӑва асӑрхавра тытма ятарлӑ комисси туса хунӑ. Комисси председателӗ – пай пуҫлӑхӗн заместителӗн тивӗҫӗсене вӑхӑтлӑха пурнӑҫлаканӗ Н.Филиппов полици майорӗ. Ҫавӑн пекех комиссин тытӑмне тата тивӗҫӗсене палӑртнӑ – вӗсем информаци килме пултаракан ҫӑлкуҫсене тимлӗхре тытаҫҫӗ.

Кӑҫал акӑ январь–октябрь уйӑхӗсенче 3408 заявленипе пӗлтернине шута илнӗ. Пӗлтӗр ҫак тапхӑрта вӗсен хисепӗ 2014-па танлашнӑччӗ. Пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн 234 материал тӑрӑх уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Полици сотрудникӗсем материалсене тишкерессипе аван ӗҫленине калаҫа хӑвармалла. Кӑҫал, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, виҫӗ талӑк хушшинче материалсене 25,9 процент ытларах пӑхса тухнӑ, пӗтӗмпе – 1045.

Вунӑ уйӑхра учетпа регистраци дисциплинипе тӑхӑр хутчен тӗрӗсленӗ: 2 – прокуратура органӗсем, 3 – Шалти ӗҫсен министерствин штаб подразделенийӗсем, 4 – «Вурнарский» пайӑн подразделенийӗсем. Тӗрӗслевсем вӑхӑтӗнче 21 ҫитменлӗх тупӑннӑ, уголовлӑ ӗҫ пуҫарма килӗшменни пирки йышӑннӑ 9 постановление улӑштарнӑ. Район прокурорӗ хушма тӗрӗслев ирттерме 429 материала тавӑрса панӑ. Тӗп сӑлтавӗ – материалсене туллин пухманни.

С.АЛЕКСЕЕВА,
информаци тивӗҫтерӗвӗн ушкӑнӗн инспекторӗ
шалти служба лейтенанчӗ.

Коммунальщиксен ултавне ҫиеле кӑларнӑ

(Вӗҫӗ. Пуҫл. 1-мӗш стр.).
хваттерлӗ ҫуртсене тытса тӑрассине пӑрахӑҫланӑ «Тӑвай районӗн пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑхӗн управляющи компанийӗ» тата «Стандарт» управляющи компанийӗ» тулли мар яваплӑ обществӑсенче саккуна пӑснӑ тӗслӗхсем тупнине палӑртнӑ. Пӗрремӗш тӗслӗхре ҫурт-йӗре тытса тӑрассишӗн тата юсассишӗн пӑхнӑ тарифсенче тӑкак висисене уяманнине пула 1 миллион та 172 пин тенкӗ сӑлтавсӑр тӑкакланӑ. «Стандарт» управляющи компанийӗн ҫавнашкал «йӑнӑшӗ» те сӑлтавсӑр 314 пин тенкӗлӗх тӑкак кӳнӗ. Унсӑр пуҫне организаци ҫурт-йӗре тытса тӑрассишӗн тарифа ытлашшипех ӳстерсе ҫирӗплетнӗ, ҫавна май ЖКХри тивӗҫтерӳсемшӗн 262 пин тенкӗ ытлашши шутласа панӑ.

Ҫӗнӗ Шупашкарта хулари пӗтӗм ҫуртсен ҫуррине яхӑн пӑхса тӑракан «Новэк» управляющи компанийӗ» ТМЯОра прокуратура граждансем ӑшӑшӑн тӳлекен укҫапа тӗллевсӗр усӑ курнине палӑртнӑ. Ҫапла ӑшӑпа тивӗҫтерекен «Коммунальные технологии» ТМЯО коммуналлӑ ресурссемшӗн 78 миллион тенкӗ ытла илеймен. Прокуратура тӗрӗслевӗн материалӗсем тӑрӑх «Новэк» ертӳҫи тӗлӗшпе уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ.

Республика влаҫӗ суеҫӗ-управляющи компанийӗсене, «укҫана аяккалла юхтаракансене», пӑркӑчлассине тата вӗсен «ури айӗнчи ҫӗре ҫунтарассине» асӑрхаттарнӑ. Ҫавӑнта пӗрлех ҫакӑ та палӑрнӑ – Патшалӑх Думин депутачӗ Анатолий Аксаков «Новэк» ертӳҫи ыйтнипе депутат запросӗ ҫырнӑ. Ҫак тӗслӗхре Чӑваш ен Президенчӗ Михаил Игнатьев политик позицийӗнчен, вӑл депутат управляющи компанийӗсене пула шар курнисене мар, вӗсем ертӳҫене хӳтӗленинчен тӗлӗннине пӗлтернӗ.

Прокуратура даннӑйӗсем тӑрӑх, кӑҫалхи 9 уйӑхра Чӑваш енре пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑх сферинче саккуна пӑснӑ 1251 тӗслӗхе ҫиеле кӑларнӑ, 593 представлени ҫырнӑ; суда 120 тавӑҫ тӑратнӑ, 134 ҫынна административлӑ явап тыттарнӑ тата 122 асӑрхаттару тунӑ. ЖКХ организацийӗн ертӳҫисем тӗлӗшпе саккуна пӑхӑнса ӗҫлемешӗн 5 уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ.

REGNUM
информаци агентствин материалӗсем тӑрӑх.

Ҫемьепе пӗрлешсе ӗҫлени – ӑнӑҫлӑ воспитани никӗсӗ

Ҫак ятпа Вӑрнарти 29-мӗш училищӗре конференци иртрӗ

Аслӑ хӗрӗм 10-мӗш класс хыҫҫӑн Вӑрнарти 29-мӗш училищӗне вӗренме каясси ҫинчен пӗлтерсен хирӗҫлемерӗм. Малтанхи кунсенчех вӑл тулли кӑмӑлпа ҫӳренине курсан савӑнтӑм. Ноябрь вӗҫӗнче акӑ пире те, ашшӗсемпе амӑшӗсене, конференцие йыхравларӗҫ.

Ачасен пуласлӑхӗпе, вӗрентӗвӗпе кӑсӑкланакан ашшӗсемпе амӑшӗсем чылайӑн пуҫтарӑннӑ. Пире таса та ҫутӑ вӗренӳ кабинечӗсене, библиотекӑпа общежити пӳлӗмӗсене кӑтартса ҫӳрерӗҫ. Кунта вӗренекенсене виҫӗ хутчен вӗри апат ҫитерни маншӑн вӑртӑнлӑх мар. Хӗрӗм шӑллӗне канхвет-печени, пылак ҫимӗҫпе пӗрре мар сайланӑ.

Кашни вӗренӳ кабинетӗнче компьютер, мультимедийлӗ проектор пурри тӗлӗнтерчӗ. Общежитинче те ачасене пурӑнма пур енлӗ условисем йӗркеленӗ: пластик чӳречесем, душ кабинисем вырнаҫтарнӑ.

Конференцие училище директорӗ Н.В.Васильев пуҫларӗ. Пирӗн ачасем ҫак вӗренӳ учрежденине суйласа илсе тӗрӗс тунине, вӗсем ял хуҫалӑх аталанӑвӗнче кирлӗ ҫынсем пуласси каларӗ. Вӗренӳ процесӗн ҫӗнӗлӗхӗсемпе те паллаштарчӗ. Ҫула ҫитмен ачасемпе ӗҫлекен Д.Б.Иванова инспектор воспитани ӗҫӗнчи ашшӗ-амӑшӗн тивӗҫӗ ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

Училищӗре ачасене хавхалантарас мелсем чылай. «4» тата «5» паллӑсемпе ӗлкӗрсе пыракан 33, училище пурнӑҫӗнче спортра хастар хутшӑнакан 53, йывӑр лару-тӑрулла ҫемьери 48 вӗренекене укҫа-тенкӗ енчен пулӑшнӑ.

Ҫакӑ ашшӗ-амӑшне тӗлӗнтерчӗ. Юрлама та, ташлама та пултараҫҫӗ кунта вӗренекенсем, чуна пырса тивекен сӑвӑсем те шӑрантарма хастар. «Анне» музыка ҫеммипе ачисемпе амӑшӗсем ӳкерӗннӗ фотосем экран ҫинче улшӑннӑ май нумай амӑшӗн куҫӗсенчен савӑнӑҫ куҫҫулӗ шӑпӑртатрӗ.

«Пирӗн училище» хаҫатра хӗрӗмӗн туслӑх ҫинчен ҫырнӑ сочиненине вуласа тухсан чунра ӑшӑ туйӑм ҫуралчӗ. Кунта ӗҫлекен, вӗрентекенсене ҫӗре ҫити пуҫ таяс килчӗ, ҫавӑнпа ҫак статьяна ҫырма шутларӑм. Ашшӗ-амӑшӗ ячӗпе лартнӑ концертра акӑ уйрӑмах Н.В.Васильев директор «Ан хуҫӑрха анне кӑмӑлне» юрра шӑрантарни чуна ҫӳрӗ.

Пирӗн ачасенче пулас специалистсене курнӑшӑн, таҫта шалта тӗвӗленнӗ пултарулӑха аталантарнӑшӑн, йывӑр вӑхӑтра пулӑшнӑшӑн Вӑрнарти 29-мӗш училищӗре вӑй хуракансене пӗтӗм ашшӗ-амӑшӗ ячӗпе тав сӑмахӗ калас килет. Пирӗн ачасен пуласлӑхӗ – училище пуласлӑхӗнче.

Людмила ДМИТРИЕВА.

Уважаемые граждане!

В соответствии с Указом Президента Российской Федерации от 28 июля 2011 года №1027 «Об утверждении Положения об Общественном совете при Министерстве внутренних дел Российской Федерации» МОМВД, ОМВД приступило к формированию Общественного совета при МОМВД, ОМВД.

В связи с этим МОМВД, ОМВД до 10 декабря 2011 года включительно принимает на рассмотрение предложения от граждан, общественных объединений и организаций, по кандидатурам для включения в состав Общественного совета.

Общественный совет формируется на основе добровольного участия в его деятельности граждан, членов общественных объединений и организаций. В соответствии с Положением об Общественном совете до 20 декабря т.г. будет сформирован новый состав совета.

Желающим вступить в состав Общественного совета необходимо заполнить заявление и анкету. Предложения от граждан, общественных объединений и организаций направляются по почтовому адресу: ул. Советская, 23 а. Тел. для справок: 2-58-25.

РЕКЛАМА ОБЪЯВЛЕНИЯ РЕКЛАМА ОБЪЯВЛЕНИЯ РЕКЛАМА

ЗАО МСО «ВУРНАРСКАЯ» ПРЕДЛАГАЕТ одно-и двухкомнатные квартиры по долевому строительству с индивидуальным отоплением и горячим водоснабжением в п.Вурнары по пер. Тракторный, на земельном участке под кадастровым номером 21:09:280135:209. Возможно участие в долевом строительстве участников ВОВ по выданным свидетельствам. С проектной декларацией можно ознакомиться на сайте: http: //www.vur-mco.narod.ru. Обращаться по т.: 8(83537) 2-52-36, 2-71-56, 8-919-679-93-49.

2012 бонусов в Новом году

Есть в мире вечные вопросы. Например, куда деваются деньги. Или о чём можно так долго говорить по телефону. Или – что подарить на Новый год?

О, эти ежегодные сомнения и колебания, волнующие нас каждый декабрь: подарить такое, чтоб веяло теплом и радовало весь год. Но при этом практичное и много места не занимало. И чтоб недорогое, потому что подарков надо много…

Специальное предложение от Деда Мороза совместно с МегаФоном «Нужный подарок» объединяет в себе всё: что может быть теплее, полезнее и важнее, чем доступная связь с родными и близкими на весь год!

2012 бонусных рублей – именно столько окажется на вашем счету, стоит вам пополнить его на 500 или более рублей до 31 января. Согласитесь, щедрый подарок. Расходуется эта сумма порционно: начиная с 1 января, каждый день по 5,5 рублей – чтобы хватило на все 366 дней високосного года.

Потратить их можно на разговоры внутри сети или мобильный Интернет. Казалось бы, что такое пять пятьдесят на разговоры? Только поздороваться.

Но – давайте посчитаем.

Например, на тарифе «Родной особенный» звонок на «МегаФон» – 11 копеек в минуту (без учета увеличения стоимости первой минуты соединения, которая составляет 0,85 руб. является фиксированной величиной и не зависит от длительности исходящего вызова (исключение составляют вызовы менее 3-х секунд). То есть на 5,5 бонусных баллов можно говорить внутри сети более 40 минут в день бесплатно!

Если же бонусные баллы израсходуются, дальнейшие звонки в этот день или мобильный Интернет будут оплачиваться согласно вашему тарифному плану.

Интернет от МегаФона уже давно завоевал доверие постоянных клиентов: оператор обеспечивает качественное покрытие по всей республике и постоянно отслеживает надежность сети – а значит, нужная страничка сайта всегда загрузится. Качественная связь от «МегаФона» не пропадает ни в одном уголке Чувашии, и мобильный Интернет вас не подведет.

С «Нужным подарком» за 5,5 бонусных рублей в день можно скачивать до 55 Мб бесплатно – если, например, у вас подключена тарифная опция «Интернет-регион» (10 копеек за 1 Мб). Общение по аське и на любимом сайте, проверка почты, просмотр фотографий – все это на высоких скоростях и почти бесплатно.

Скидку можете получить как вы сами, так и любой абонент, чей счет вы пополнили.

А пятьсот рублей, положенные на счёт, пригодятся для подключения выгодных опций и участия в новых акциях «МегаФона».

«Нужный подарок» к Новому году поможет ответить на все вечные вопросы и обеспечит вас и ваших близких надёжной и доступной связью на весь год.

Пенсионные накопления – получить сразу!

В 2012 году отдельные граждане смогут получить свои пенсионные накопления сразу, а не в течение всей пенсионной жизни.

С января 2002 года по декабрь **2004** года у женщин **1957–1966** годов рождения и мужчин **1953–1966** годов рождения ежемесячно из заработной платы **2%** взносов направлялись на формирование накопительной части трудовой пенсии. **С 2005** года в Федеральный закон «О трудовых пенсиях в РФ» были внесены изменения, и указанные граждане были лишены накопительной части пенсии. При этом государством накопившиеся за 3 года у граждан денежные средства возвращены не были. Более того, часть женщин 1957–1966 годов рождения и мужчин 1953–1966 годов рождения должны были в текущем году получить некоторую прибавку к трудовой пенсии в виде накопительной части пенсии, сформированной за счет тех самых 2-процентных отчислений в ПФР. Но они не могли реализовать свое законное право, поскольку не было соответствующего закона.

И вот **23 ноября 2011** года Госдума РФ приняла закон « О порядке финансирования выплат за счет средств пенсионных накоплений», который должен вступить в силу с **1 июля 2012** года.

Законом предусмотрено,что в следующем году женщины **1957–1966** годов рождения и мужчины **1953–1966** годов рождения смогут получить свои пенсионные накопления полностью и сразу, как только Правительство РФ утвердит порядок осуществления их выплат.

Получить свои пенсионные накопления сразу смогут и граждане, получающие трудовую пенсию по инвалидности или трудовую пенсию по случаю потери кормильца либо пенсию по государственному пенсионному обеспечению, которые не приобрели права на установление трудовой пенсии по старости, а также граждане, размер накопительной части трудовой пенсии по старости которых в случае ее назначения составил бы 5% или меньше по отношению к размеру трудовой пенсии по старости.

Администрация Вурнарского района планирует предоставить в аренду следующие земельные участки:

Кадастровый номер земельного участка (категория земель)	Месторасположение земельного участка: Чувашская Республика, Вурнарский район	Площадь з/у, кв.м.	Целевое назначение земельного участка	Срок аренды
21:09:270103:407 (земли нас. пунктов)	д. Новые Яхакасы, северная часть кадастрового квартала 21:09:270103	22	для размещения гаража	на 49 лет
21:09:290101:825 (земли нас. пунктов)	с/пос Буртасинское, д. Буртасы	36	для размещения базовой станции сети сотовой радиоэлектронной связи	на 49 лет
21:09:220102:860 (земли нас. пунктов)	с/пос Янгорчинское, д. Хорнзор, ул. Вурнарская	36	для размещения базовой станции сети сотовой радиоэлектронной связи	на 49 лет
21:09:310106:185 (земли с/х назначения)	с/пос Ершипосинское, земельный участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:09:310106	16493	для сельскохозяйственного производства	на 49 лет
21:09:310106:186 (земли с/х назначения)	с/пос Ершипосинское	350293	для сельскохозяйственного использования	на 49 лет
21:09:310105:530 (земли с/х назначения)	с/пос Ершипосинское	19829	для сельскохозяйственного использования	на 49 лет